*Пулӑм*

# Ыр кӑмӑллӑх шанӑҫ ҫуратать

**Наци библиотекин ӗҫченӗсем, вӗсемпе пӗр шухӑшлисем «Bibliopie: пӗр тан майсем» пректа ҫулталӑка яхӑн пурнӑҫлаҫҫӗ. Ҫак вӑхӑтра тӗрлӗ ҫынна пӗрлехи ӗҫ, шухӑш-тӗллев чӑмӑртанма пулӑшрӗ. Литература каҫӗсем, тӗл пулусем, ӑсталӑх класӗсем, тӗн, право, кӗвӗ терапийӗн сехечӗсем, компьютер курсӗсем... пуриншӗн те усӑллӑ пулчӗҫ. Вун-вун ҫынна пулӑшу пама май килни пысӑк шанчӑк ҫуратать.**

Наци библиотекинче «Информпортал: пуриншӗн те пӗр тан майсем» информаци ресурсӗн уҫлӑхне йӗркеленӗ. Вӑл ӑслӑлӑхри, вӗрентӳри, культурӑри ҫӗнӗлӗхсемпе паллашма, виртуаллӑ уҫлӑхран тӗрлӗ информаци илме пулӑшать. «Информпортал сусӑрсене ҫеҫ мар, пурне те питӗ кирлӗ. Сывлӑхӗ хавшакран ҫын тӗнчерен пытанма тӑрӑшни никамшӑн та вӑрттӑнлӑх мар. Интернет уҫлӑхӗпе усӑ курса сусӑрсене пӗр-пӗринпе хутшӑнма, ҫӗнӗ тӗнче уҫма майсем туса пани пысӑк пӗлтерӗшлӗ...» – тет Ольга Георгиева, виртуаллӑ уҫлӑха йӗркелекенсен тӗп эксперчӗ тата консультанчӗ пулса тӑнӑскер. Сӑмах май, пӗр уйӑхра ҫеҫ ҫак портала 5886 ҫын пӑхнӑ, 703-шӗ регистрациленнӗ.

Проект пулӑшнипе сусӑрсем валли Интернет-ресурссен кӑтартмӑшне пичетленӗ. Кӑларӑм социаллӑ хӳтлӗх тата реабилитаци ыйтӑвӗсемпе, культурӑпа тата искусствӑпа ҫыхӑннӑ порталсемпе сайтсене тупма пулӑшать. Наци библиотеки ҫавӑн пекех сусӑрсен пултарулӑхӗпе паллаштаракан «Ҫурхи кӑмӑл» диск хатӗрленӗ.

Кӑмӑллӑ самантсенчен пӗри – сусӑрсене компьютер парнелени. Акцие хутшӑнакансем йышлӑ пулнӑ. «Чӑвашгражданпроект» ООО, «Selenium Internazional Group» компани /президенчӗ В.Мочалов/ т.ыт. ыр кӑмӑллӑхпа палӑрнӑ. И.Н.Ульянов ячӗллӗ ЧПУ студенчӗ А.Клементьев нетбук хуҫи пулса тӑнӑ. Алексей – ачаран инвалид, анчах ҫакӑ унӑн харсӑрлӑхне нимӗн чухлӗ те чакармасть. Вӑл историпе тата вӑй экстримӗпе кӑсӑкланать. М.Воробьева, С.Виткова компьютер парнеленӗ. 3-мӗш ушкӑнри инвалид Михаил Николаевич – пултарулӑ ҫын, художник, Шупашкарти Акцыновсен ячӗллӗ 6-мӗш ача-пӑча ӳнер шкулӗнче рисовани преподавателӗнче ӗҫленӗ. Наци библиотеки ирттерекен мероприятисене яланах хастар хутшӑнать, нумай вулакансен йышӗнче вӑл. Сергей Васильевич – поэт, сӑвӑ пуххисен авторӗ. Интернет урлӑ Раҫҫейри поэтсемпе ҫыхӑну тытать. Компьютер ӑна ҫак хутшӑнӑва вӑйлатма пулӑшӗ. Тӗп хулари ятарлӑ 3-мӗш шкула принтер, сканер, ксерокс тивӗҫнӗ.

■ **И.СЕРГЕЕВА**